27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ДЕКАБРЬ 10 ВЫРСАРНИКУН 241(6736) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

Фронт штабӗн начальникне Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем БУДАПЕШТ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшманӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ оборонине татнӑ, татса кӗнӗ вырӑна 120 километр таран сарнӑ, 60 километр таран шалалла кӗрсе кайнӑ, Будапешт хулинчен ҫурҫӗртерехре ДУНАЙ шывӗ ҫине тухнӑ.

Фронт ҫарӗсем ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах БУДАПЕШТРАН кӑнтӑртарахра ДУНАЙ шывӗ урлӑ каҫса кайнӑ, тӑшманӑн ҫав шывӑн хӗвеланӑҫ хӗрринчи оборонине татнӑ тата ВЕЛЕНЦЕ кӳлли патӗнче пирӗн ДУНАЙ шывӗн хӗвеланӑҫ хӗррипе ҫурҫӗрелле наступлени туса пыракан ҫарсемпе пӗрлешнӗ.

Наступлени туса пырса, пирӗн ҫарсем тӑшман оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗсене — БАЛАШШАДЬЯРМАТ, НОГРАД, БАЦ, АСОД, ЭРЧИ хулисене тытса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла йышӑннӑ.

Тӑшман оборонине татассишӗн тата ДУНАЙ шывӗ урлӑ каҫассишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: ШУМИЛОВ генерал-полковникӑн, ЛУКИН генерал-майорӑн, ШЛЕМИН генерал-лейтенантӑн, БИРМАН генерал-майорӑн, МАНАГАРОВ генерал-лейтенантӑн, ЯКОВЛЕВ генерал-майорӑн, САФФИУЛИН генерал-лейтенантӑн, АЛЕХИН генерал-майорӑн, ЛАЗЬКО генерал-майорӑн, ГРИГОРОВИЧ генерал-майорӑн, КОЛЧУК генерал-майорӑн, КРУЗЕ генерал-майорӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорӑн, ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ генерал-майорӑн, ФЕДОРОВСКИЙ генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, ВАСИЛЕВСКИЙ полковникӑн, КОРКИН полковникӑн, БАТЛУК полковникӑн, МОЛОЖАЕВ генерал-майорӑн, ЛИЛЕНКОВ генерал-майорӑн, ВОЛОШИН полковникӑн, САРАЕВ генерал-майорӑн, ДУНАЕВ полковникӑн, КАРАМЫШЕВ генерал-майорӑн, ОРЛОВ полковникӑн, ЛОСЕВ генерал-майорӑн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ФОМИНАН, артиллери генерал-майорӗн ШМАКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ПЕТРОВАН, артиллери генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕНКОН, артиллери генерал-майорӗн ЗЫКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ГУСАРОВАН, артиллери генерал-майорӗн ИВАНОВАН, артиллери генерал-майорӗн БОБРОВНИКОВАН, артиллери генерал-майорӗн ПОПОВИЧАН, ГУЩИН полковникӑн, НЕКРАСОВ полковникӑн, РОДИН полковникӑн, ЛЮБИМОВ подполковникӑн, САПОЖНИКОВ полковникӑн, КАЗАК подполковникӑн, ДЕНИСЕНКОВ подполковникӑн, ТРОНЕВ подполковникӑн, КИСЛЫЙ подполковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КУРКИНАН, танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КРАВЧЕНКОН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ШТРОМБЕРГАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ВОЛКОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн САВЕЛЬЕВАН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ЖДАНОВАН, БРИЖИНЕВ полковникӑн танкисчӗсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантӑн, ПИЧУГИН генерал-майорӑн, КУЦ генерал-майорӑн, ГОЛОВСКИЙ генерал-майорӑн, ПАВЛОВ генерал-майорӑн, ХРУСТАЛЕВ генерал-майорӑн, БЕЛОУСОВ генерал-майорӑн, ГАГУА полковникӑн, НИКИФОРОВ полковникӑн, БЛИЗНЮК полковникӑн кавалерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СЕЛЕЗНЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СТЕПИЧЕВАН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНАН, авиаци генерал-майорӗн ПРОСТОСЕРДОВАН, ЧАНПАЛОВ полковникӑн, РОМАНОВ полковникӑн, СУШКО майорӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЦИРЛИНАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ПЛЯСКИНАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ИГНАТОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТУПИЧЕВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ТЮЛЕВАН, ЦЕПЕНЮК полковникӑн, КОВАЛЕНКО полковникӑн, ИСАЕВ полковникӑн, МЯСНИКОВ полковникӑн КАЛИНИЧЕНКО полковникӑн, НАСОНОВ полковникӑн, АНЗАУРОВ подполковникӑн саперӗсем; ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ЛЕОНОВАН, ГРАЧЕВ подполковникӑн, ЕГОРОВ полковникӑн, МАКАРЕНКО полковникӑн, ШЕРВУД полковникӑн, ШИШЕЛОВ майорӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн КАРПОВАН связисчӗсем.

Тунӑ ҫӗнтерӗве илаплӑха палӑртса хӑварас тесе, тӑшман оборонине татассишӗн тата ДУНАЙ шывӗ урлӑ каҫассишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе награддӑлама тӑратас.

Паян, декабрӗн 9-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, тӑшман оборонине татнӑскерсене тата ДУНАЙ шывӗ урлӑ каҫса кайнӑскерсене, хамӑр Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, тӑшман оборонине татассишӗн тата ДУНАЙ шывӗ урлӑ каҫассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, пӗтӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе ник ама пӑхӑнмаллӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи декабрӗн 9-мӗшӗ.

И. В. Сталин Франци Правительствин пуҫлӑхӗпе де Голль генералпа калаҫни

Декабрӗн 8-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин Франци Республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин Председателӗпе де Голль генералпа калаҫнӑ.

Калаҫура ҫаксем пулнӑ: СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов, Совет Союзӗн Францири Посолӗ А. Е. Богомолов, Франци Республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ Ж. Бидо господин, Франци Республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин Совет Союзӗнчи Представителӗ Р. Гарро господин.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Михаил Григорьевич Цхакая юлташа Ленин орденӗпе наградӑласси ҫинчен

Совет государствипе большевиксен партийӗшӗн питӗх те паплӑ ӗҫсем тунӑшӑн, нумай ҫул хушши обществӑпа политика тӗлӗшпе ӑнӑҫлӑн ӗҫлесе тӑнӑшӑн, ҫуралнӑранпа 80 ҫул ҫитнӗ май, Михаил Григорьевич Цхакая юлташа ЛЕНИН орденӗ парса наградӑлас,

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи декабрӗн 8-мӗшӗ.

Сталин юлташӑн „Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен" ятлӑ кӗнекине тӑваттӑмӗш хут пичетлесе кӑларассӗ

Политикӑллӑ литература кӑларакан государство издательстви Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ятлӑ кӗнекине тӑваттӑмӗш хут пичетлесе кӑларать.

Тӑваттӑмӗш кӑларӑма ҫӗнӗрен ҫаксене кӗртнӗ: Оборона Государственный Комитечӗн Председателӗн И. В. Сталин юлташӑн Октябрти Социализмлӑ Аслӑ Революци 26 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладне; Верховный Главнокомандующин 1943 ҫулхи ноябрӗн 7-мӗшӗнче панӑ приказне; Верховный Главнокомандующин 1944 ҫулхи февралӗн 23-мӗшӗнче панӑ приказне; Верховный Главнокомандующин 1944 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗнче панӑ приказне; И. В. Сталин юлташӑн «Правда» корреспонденчӗн ыйтӑвӗсем ҫине 1944 ҫулхи июнӗн 13-мӗшӗнче панӑ отвечӗсене; Оборона Государственный Комитечӗн Председателӗн И. В. Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладне; Верховный Главнокомандующин 1944 ҫулхи ноябрӗн 7-мӗшӗнче панӑ приказне.

Ҫак кӗнекене 5 миллион экземпляр пичетлесе кӑларассӗ. (ТАСС).

ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатӗнче

Ҫамрӑксен вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен звенисен 1944 ҫулхи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсем

Ӑмӑртӑва пурӗ ҫамрӑксен 369 звени хутшӑннӑ. Вӑл звенисенче 2.247 комсомолецпа союзра тӑман ҫамрӑк ӗҫленӗ. 302 звено тырӑ планпа пӑхнӑ чухлӗ е ытларах та туса илнӗ. Вӑрнар, Вӑрмар, Красноармейски, Сӗнтӗр тата Шӑхасан районӗсенчи ҫамрӑксен звенисем ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартнӑ.

Вӑрнар районӗнчи Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхозри В. М. Миронова юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе ҫамрӑксен звени ӑмӑртура пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ. Вӑл 6 гектар ҫӗр ҫинчен кашни гектартан 33,3 центнер урпа туса илнӗ. План тӑрӑх 13,5 центнер илмелле пулнӑ.

Красноармейски районри «Красный Порденер» колхозри О. Т. Трофимова юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе ҫамрӑксен звени пысӑк тухӑҫлӑ кок-сагыз туса илнӗ. Ҫак звено 1,82 гектар ҫӗр ҫинчен кашни гектартан 21,87 центнер кок-сагыз тымарӗ пухса илнӗ. План тӑрӑх кашни гектартан 4 центнер илме пӑхнӑ.

Вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӳре ҫамрӑксен ҫак 3 звени уйрӑмӑнах лайӑх ҫитӗнӳсем тунӑ. Вӑрнар районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри П. Г. Тереков юлташӑн звени, Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхозри М. А. Андреев юлташӑн звени, Шӑхасан районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхозри И. С. Мыльников звени. Красноармейски районри «Красный Порденер» колхозри Р. П. Петрова, А. Е. Егорова, Н. Т. Трофимова юлташсем ертсе пыракан тата ытти нумай звеносем те лайӑх ӗҫленӗ.

ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ лайӑх ӗҫленӗ звеносемпе вӗсен руководителӗсене СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн Мухтав грамотипе, «Отличник социалистического сельского хозяйства» ятлӑ значокпа тата хаклӑ парнесемпе наградӑлама тӑратма йышӑннӑ.

Вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен ҫамрӑксен звенисен социализмлӑ ӑмӑртӑвне организацилес ӗҫӗре Вӑрнар районӗнчи Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхозри ВЛКСМ пуҫламӑш организацийӗ, ВЛКСМ Красноармейски райкомӗн секретарӗ Н. Г. Скворцов юлташ, Шӑхасан районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхозри ВЛКСМ пуҫламӑш организацин секретарӗ И. С. Мыльников юлташ, Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхоз председателӗ И. Г. Григорьев юлташ, Комсомольски районри «Трактор» колхозри уйхир бригадирӗ Е. П. Павлова юлташ, Красноармейски районри «Красный Порденер» колхозри кок-сагыз туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадӑн бригадирӗ Р. П. Петрова тата ҫак колхозри комсомол организацин секретарӗ В. В. Викторова юлташсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Ҫакӑнпа пӗрлех, ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ Элӗк, Йӗпреҫ, Канаш, Кувакино Пӑрачкав, Первомайски, Хӗрлӗ Чутай, Етӗрне районӗсенчи ҫӗрӗҫ пайӗсемпе ВЛКСМ райкомӗсем ҫамрӑксен звенисен социализмлӑ ӑмӑртӑвне ертсе пырас ӗҫрен пӑрӑнса тӑнине палӑртнӑ. Ҫавна пула вӑл районсенче ҫамрӑксен звенисем саланса кайнӑ.

ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ВЛКСМ райкомӗсемпе пуҫламӑш организаци секретарӗсене, ҫӗрӗҫ пайӗсен заведующийӗсемпе колхоз председателӗсене 1945 ялхуҫалӑх ҫулӗнче вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе ӑмӑртакан ҫамрӑксен звенисене ертсе пырас ӗҫе лайӑхлатма хушса хӑварнӑ.

Вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе ӗҫлеме звеносем тӑвакан ҫамрӑксен пуҫарӑвне пур майсемпе те сарса пымалла. Вӑл звеносене ҫӗр лаптӑкӗсем тата ялхуҫалӑх инвентарӗсем уйӑрса памалла. Агрономсемпе опытлӑ колхозниксем ялаҫах пулӑшса тӑрассине йӗркелемелле.

МТС-сенчи ҫамрӑксен трактор бригадисен, ҫамрӑк трактористсемпе трактористкӑсен 1944 ялхуҫалӑх ҫулӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсем

Ӑмӑртӑва ҫамрӑксен 53 трактор бригади хутшӑннӑ. Вӑл бригадӑсенче МТС-сенчи 1.044 ҫамрӑк трактористсемпе трактористкӑсем ӗҫленӗ. Ӑмӑртура ҫамрӑксен 29 трактор бригади тата 507 тракториспа трактористка ҫулталӑкри плана тултарнӑ е иртерсе тултарнӑ. Ҫамрӑк трактористсемпе трактористкӑсен, ҫемҫе суха ҫине куҫарса шутласан, план тӑрӑх 55.376 гектар сухаламалла пулнӑ. Ӑмӑртса ӗҫленине пула вӗсем 60.178 гектар сухаланӑ, ҫапла вара тракторсемпе ҫулталӑк хушшинче тумалли ӗҫ планне 109 процент тултарнӑ. Ҫав вӑхӑтрах 36.963 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Ӑмӑртура ҫак бригадӑсем паха тӗслӗхсем кӑтартнӑ: Вӑрмар МТС-ӗнчи В. Л. Лукин бригади, вӑл тракторсемпе тумалли ӗҫ планне 180 процент тултарнӑ тата 3.459 килограмм горючи перекетленӗ. Елчӗк МТС-ӗнчи Г. Н. Струнков бригади плана 170 процент тултарнӑ, 1.800 килограмм горючи перекетленӗ. Куславкка МТС-ӗнчи А. Т. Скворцов бригади плана 162 процент тултарнӑ, 1.100 килограмм горючи перекетленӗ.

Октябрьски, Кожевенски, Сурмайданри, Пӑрачкаври, Кувакинори, Етӗрнери, Чкаловски МТС-сенчи ҫамрӑксен бригадисемпе ҫамрӑк трактористсем тата трактористкӑсем ӑмӑртура ҫителӗксӗр тӗслӗхсем кӑтартнӑ.

ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне, Елчӗк МТС-ӗнчи Г. Н. Струнков ертсе пыракан бригадӑран илсе, Вӑрмар МТС-ӗнчи В. Л. Лукин юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадине пама йышӑннӑ.

Ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартнӑшӑн ҫамрӑксен чылай бригадисене, ҫамрӑк трактористсемпе трактористкӑсене наградӑлама ВЛКСМ Центральный Комитечӗпе СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне тӑратнӑ. Ҫамрӑк трактористсемпе трактористкӑсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне организацилес ӗҫре Елчӗк районӗнчи комсомол организацин, Шӑхасан МТС-ӗнчи комсомол организацин, ВЛКСМ Вӑрмар райкомӗн секретарӗ И. Ф. Залевский юлташӑн, Калинино МТС-ӗнчи ВЛКСМ комитечӗн секретарӗн И. С. Сидоров юлташӑн, Йӗпреҫ МТС директорӗн Г. И. Иванов юлташӑн лайӑх ӗҫӗсене палӑртса хӑварнӑ.

ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ВЛКСМ райкомӗсен секретарӗсемпе МТС директорӗсене тракторсене юсанӑ ҫӗрте социализмлӑ ӑмӑрту организацилес тӗлӗшпе лайӑхрах ӗҫлеме кирлине кӑтартса хӑварнӑ.

Ҫамрӑк сухаҫӑсемпе трактористсен 1944 ҫулта кӗрхи ҫӗртме тӑвас тӗлӗшпе пынӑ социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсем

Кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫри ӑмӑртӑва пурӗ 5.764 ҫамрӑк сухаҫӑ хутшӑннӑ, вӗсен шутӗнче 2.645 комсомолец пулнӑ. Комсомолецсем пуҫарнипе, 274 вӑкӑра кӳлсе ӗҫлеме вӗрентнӗ тата вӗсемпе кӗрхи ҫӗртме тунӑ ҫӗрте усӑ курнӑ.

Вӑрнар, Чурачӑк, Ҫӗрпӳ, Шупашкар, Октябрьски, Сӗнтӗр тата Вӑрмар районӗсенчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартнӑ.

Вӑрмар районӗнчи «Свобода» колхозри Т. Тимофеев юлташ икӗ вӑкӑрпа ӗҫлесе, пӗр касӑллӑ плугпа 31 гектар кӗрхи ҫӗртме тунӑ. Советски районри «Комбайн» колхозри ҫамрӑк колхозница Е. Александрова юлташ икӗ касӑллӑ плугпа 50 гектар сухаланӑ. Елчӗк МТС-ӗнчи тракторист Г. Ахматуллин, план тӑрӑх 25 гектар сухалас вырӑнне, 120 гектар сухаланӑ тата 250 килограмм гроючи перекетленӗ.

ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫапла йышӑннӑ:

Кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартнӑшӑн, туртӑм вӑйне упраса хӑварнӑшӑн тата ӗҫе лайӑх пахалӑхпа тунӑшӑн ҫаксене пӗрремӗш премипе, кашнинех 500-шер тенкӗ укҫа парас: трактористсене: Г. А. Ахматуллина (Елчӗк МТС-ӗ), Н. С. Семеновӑна (Ишлей МТС-ӗ); ҫамрӑк сухаҫӑсене: Е. А. Александровӑна (Советски районри «Комбайн» колхоз), Т. Т. Тимофеева (Вӑрмар районӗнчи «Свобода» колхоз), А. Е. Егорова (ҫав районри «Дружба» колхоз), В. Еремеева (Шӑмӑршӑ районӗнчи «Пламя труда» колхоз), А. Гусева (Сӗнтӗр районӗнчи 1905 ҫулти революци ячӗпе тӑракан колхоз), С. Р. Рахмязянова (Елчӗк районӗнчи «Комбайн» колхоз), А. И. Жарковӑна (Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз), С. Т. Тимофеева (Чурачӑк районӗнчи «Трактор» колхоз).

Иккӗмӗш премипе, 250-шар тенкӗ укҫа, ҫаксене парас:

ҫамрӑк сухаҫӑсене: А. П. Прокопьева (Муркаш районӗнчи Доронин ячӗпе тӑракан колхоз), Н. А. Александрова (Калинин районӗнчи «Первое мая» колхоз), К. Портнова (Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз), Л. И. Иванова (Шупашкар районӗнчи «Крахмал» колхоз), Я. С. Васильева (Сӗнтӗр районӗнчи «Ударник» колхоз), В. С. Скворцова (ҫав районри Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз), М. В. Викторовӑна (Муркаш районӗнчи «Труд» колхоз), В. Романова (Тӑвай районӗнчи «8 марта» колхоз), А. Константиновӑна (Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт колхоз), В. В. Кжукова (Вӑрмар районӗнчи «Свобода» колхоз).

Кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫре ҫамрӑк сухаҫӑсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне лайӑх организацилесе ертсе пынӑшӑн, ҫавна май кӗрхи ҫӗртме тумалли государство планне ытлашшипех тултарнӑшӑн, пӗрремӗш премипе — 500-шер тенкӗ укҫа — ВЛКСМ Чурачӑк райкомӗн секретарьне Т. П. Петровӑна тата Вӑрмар районӗнчи «Свобода» колхозри ВЛКСМ комитечӗн секретарьне Матросов юлташа памалла тунӑ. Иккӗмӗш преми — 250-шар тенкӗ укҫа — Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри ВЛКСМ комитечӗн секретарьне Н. Я. Якимов тата Шӑмӑршӑ районӗнчи «Динамо» колхозри ВЛКСМ комитечӗн секретарьне М. В. Ельцов юлташсене пама йышӑннӑ.

ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ Улатӑр, Кувакино, Пӑрачкав, Тӑвай, Ҫӗмӗрле, Чкаловски тата Комсомольски районсенчи ҫӗрӗҫ пайӗсемпе ВЛКСМ райкомӗсем ҫамрӑк сухаҫӑсемпе трактористсен кӗрхи ҫӗртме тӑвас тӗлӗшри социализмлӑ ӑмӑртӑвне ҫителӗксӗр ертсе пынине палӑртнӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 8-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Венгрире БАЛАТОН кӳллипе ДУНАЙ шывӗ хушшинче ҫаплах наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла тытса илнӗ. Вӑл шутра — ШАРАШД, ШАРКЕРЕСТУР, КАЛОЗ, АБА, ШОПОНЬЯ, ЧЕС, МЕЗОСЕНТДЬИ, ЛЕПШЕНЬ, БАЛАТОНФЕКАЯР ятлӑ пысӑк ялсем тата ШАРАШД, АБА, ШАРКЕРЕСТУР, КИШЧЕРИ, ЛЕПШЕНЬ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах пирӗн БАЛАТОН кӳллипе ДРАВА шывӗ хушшинче наступлени туса пыракан ҫарсем халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—САБАШ, НАДЬКОРПАД, РИНЬЯСЕНТКИРАЛЬ, БАКХАЗА, ШОМОДЬ АРЧ ятлӑ пысӑк ялсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Декабрӗн 7-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 33 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 3 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Венгрире Балатон кӳллипе Дунай шывӗ хушшинче пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Тӑшман, малтанах туса хатӗрленӗ оборонӑ позицисемпе усӑ курса, хытӑ хирӗҫ тӑнӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем, ӑнӑҫлӑ маневр туса илсе, тӑшман оборонине саваллланса кӗрсе кайнӑ та чугун ҫулсен Шарашд ятлӑ узелне туртса илнӗ. Балатон кӳлли патӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсене Лепшень ятлӑ узловой чугун ҫул станцийӗнчен хӑваласа кӑларнӑ. Станцире ҫар хатӗрӗсем тиесе лартнӑ 80 вагон тата ҫар склачӗсем тытса илнӗ. Ҫитӗнӗве малалла вӑйлатса пырса, совет чаҫӗсем Балатонфекаяр ятлӑ пысӑк яла туртса илнӗ. Кунта венгерсен Секешфехервар ятлӑ пысӑк хулинчен 22 километр кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре ларать.

Балатон кӳллипе Драва шывӗ хушшинче тӑшман, пирӗн ҫарсем малалла куҫса пынине чарса лартма хӑтланса, 20 контратака ытла тунӑ. Совет чаҫӗсем тӑшман контратакисене пурне те ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ унтан тӑшмана кайне пыра-пыра ҫапса, халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла туртса илнӗ. Кун каҫиччен 1.500 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 3 танк, пӗр самолет, 22 тупӑ тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Нимӗҫсемпе венгерсен 300 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тӑшман пехотин пӗр батальонӗ, артиллеристсемпе минометчиксем персе пулӑшнипе, пирӗн позицисене атакӑланӑ. Пуҫланса кайнӑ ҫапӑҫура пирӗн боецсем нимӗҫсене каялла хӑваласа янӑ. Пирӗн позицисем умӗнче тӑшманӑн 200 виллине ҫити выртса юлнӑ. Совет боецӗсем 3 станковӑй пулемет тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронтра тӑшмана хирӗҫ тупӑсемпе персе тӑнӑ. Совет Союзӗн Геройӗ Бережной старшина ертсе пыракан тупӑ расчечӗ, тӑшман позицийӗсене персе тӑрса, нимӗҫсен темиҫе туппине пусарса лартнӑ, гитлеровецсен взводне сапаласа янӑ. Имченко старши сержант ертсе пыракан саперсен ушкӑнӗ минӑсем лартнӑ вырӑн урлӑ ҫул уҫса тухнӑ та, нимӗҫсен траншейисем патне пырса, вӗсене гранатӑсемпе вӑркӑнтарма тытӑннӑ. Совет саперӗсем 12 гитлеровеца вӗлернӗ те тӗрӗс-тӗкелех хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика Флочӗн карапӗсем Балтика тинӗсӗнче нимӗҫсен пӗтӗмӗшпе 19 пин тонна таякан 2 транспортне шыва путарнӑ.

* * *

Венгрире, Дунай шывӗ пагӗнче, венгерсен 51-мӗш пехотнӑй полкӗ, полк командирӗ Батан полковник ертсе пынипе, пӗтӗмӗшпех Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ. Тыткӑна мӗн пурӗ 29 офицер тата 1.390 салтак парӑннӑ. Полк хӑйӗн пӗтӗм хӗҫпӑшалне, снаряженине, обозӗсене тата кухнисене те совет ҫарӗсене панӑ. Тыткӑна парӑннӑ Батан полковник ҫапла каласа панӑ: «Полка оборонӑллӑ позици йышӑнма приказ пачӗҫ. Эпӗ полкри офицерсене канашлӑва пухрӑм. Кам мӗн шухӑшлачине пӗлсен, эпир пим усӑсӑр хирӗҫ тӑрас ӗҫе пӑрахса пӗтӗм полкӗпех тыткӑна парӑнмалла тесе йышӑнтӑмӑр».

Венгерсен 2-мӗш горнострелковӑй бригадинчи 13-мӗш пограничнӑй батальонӑн 1-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ взвод командирӗ Имре Бихари ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Малти позицие ҫитсен, 2-мӗш бригада командирӗ пире сӑмах тухса каларӗ. Унӑн сӑмахӗ ҫапла пулчӗ: «Сире ятарласа уйрӑм вӗрентнӗ, эсир тусем ҫинче ҫапӑҫма пӗлетӗр; кам та кам каялла тарма пуҫлать, эпӗ ӑна хам алӑпа персе пӑрахатӑп», терӗ. Ҫапӑҫусенче пирӗн батальона аркатса тӑкрӗҫ. Батальонра пӗтӗмпе те 60 ҫын кӑна тӑрса юлчӗ. Командовани пире тыта илсе тухрӗ. Батальона ҫӗмӗрсе тӑкнӑ тӗрлӗ чаҫсенчен ҫынсем хушса пачӗҫ. Часах пире каллех фронта ячӗҫ. Фронтра эпир ӗлӗкхи пекех начар ӗҫсене куртӑмӑр. Пирӗн чаҫсем, вырӑссем ҫавӑрса илессинчен хӑраса, ним тӗлли-паллисӗр каялла чакса пычӗҫ. Эпир те каялла чакма пуҫларӑмӑр. Каҫхине пире вырӑссем атакӑларӗҫ. Эпир текех нимӗҫсемшӗн хамӑр пурнӑҫа пӗтерес темерӗмӗр те пӗтӗм отделенипех тыткӑна парӑнтӑмӑр».

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Вырӑнти промышленноҫпа апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсен, промысла коопераципе инвалидсен кооперации артелӗсен тата пурӑнмалли ҫуртйӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнчи итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗ вырӑнти промышленноҫпа апат-ҫимӗҫ промышленность предприятийӗсен, промысла коопераципе инвалидсен кооперации артелӗсен тата пурӑнмалли ҫуртйӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ. Ӑмӑртура ҫаксем мала тухнӑ тесе йышӑннӑ:

Вырӑнти промышленность предприятийӗсен ӑмӑртӑвӗнче Вӑрнар районӗнчи промкомбинат (Управляющийӗ Кузнецов юлташ, райсовет исполкомӗн председателӗ Осипов юлташ) мала тухнӑ. Вӑл ноябрь уйӑхӗнчи плана пӗтӗм продукци туса кӑларас енӗпе 135,5 процент, куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас енӗпе 136,3 процент тултарнӑ. Ҫакна шута илсе, Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Вӑрнар районӗнчи промкомбинатрах хӑвармалла тунӑ тата ӑна ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилеме 15.000 тенкӗ укҫа панӑ.

Ноябрь уйӑхӗнче иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш премисем илме тивӗҫлӗ промкомбинатсем пулман.

Ноябрь уйӑхӗнче Тӑвай, Шуркасси, Куславкка, Советски тата Ҫӗмӗрле райпромкомбиначӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен ӑмӑртӑвӗнче Шупашкар хулинчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗ (управляющийӗ Мирошин юлташ, хула совет исполкомӗн председателӗ Аникин юлташ) мала тухнӑ. Вӑл ноябрь уйӑхӗнчи плана пӗтӗм продукци туса кӑларас енӗпе 277 процент тултарнӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне, Канаш хулинчи апат-ҫимӗҫ комбинатӗнчен илсе, Шупашкар хулинчи апат-ҫимӗҫ комбинатне памалла тунӑ тата ӑна ӑмӑртура мала тухнӑ работниксене премилеме 4.000 тенкӗ укҫа панӑ.

Ноябрь уйӑхӗнче Улатӑрпа Канаш хулисенчи тата Куславкка районӗнчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Промысла кооперации артелӗсен ӑмӑртӑвӗнче Етӗрнери Сталин ячӗпе тӑракан, Шупашкарти «Металлист» тата Шупашкар районӗнчи Ҫӗньял Уйкасри «Арӑслан» артельсем мала тухнӑ тесе йышӑннӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне, Канашри «Авангард» артельтен илсе, Етӗрнери Сталин ячӗпе тӑракан артеле памалла тунӑ тата ӑна 8.000 тенкӗ премипанӑ. Шупашкарти «Металлист» артеле 5.000 тенкӗ, Ҫӗньял Уйкасри «Арӑслан» артеле 4.000 тенкӗ укҫа парса премиленӗ.

Ноябрь уйӑхӗнче Октябрьски районри «Труд», Куславкка районӗнчи Клара Цеткин ячӗпе тӑракан, Шупашкар районӗнчи «Паха тӗрӗ» артелӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Инвалидсен кооперации артелӗсен ӑмӑртӑвӗнче ноябрь уйӑхӗнче Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тата премисем илме тивӗҫлӗ артельсем пулман.

Пурӑнмалли ҫуртйӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗсен ӑмӑртӑвӗнче Канашри Колхозник ҫурчӗ, Шупашкар хулинчи канализаци отделӗ тата Канаш хулинчи пурӑнмалли ҫуртйӗр управленийӗ мала тухнӑ тесе йышӑннӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Канашри Колхозник ҫуртӗнчех хӑвармалла тунӑ тата ӑна 5.000 тенкӗ премипанӑ.

Шупашкар хулинчи канализаци отделне 3.000 тенкӗ, Канаш хулинчи пурӑнмалли ҫуртйӗр управленине 2.000 тенкӗ парса премиленӗ.

Шупашкар хули валли вутӑ ҫителӗклӗ турттарса парар!

Шупашкар районӗнчи колхозниксем республика столици валли вутӑ турттармалли плана срокчен тултарма пулкӑ

КӲКЕҪ, декабрӗн 9-мӗшӗ. (Телефонпа). Кунта ялсовет тата колхоз председателӗсен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ республика столици—Шупашкар хули валли вутӑ турттарасси ҫинчен йышӑннӑ постановление сӳтсе яврӑмӑр.

Канашлӑва пухӑннисем, Совнаркомпа Обком постановленине тулли кӑмӑлпа йышӑнса, Шупашкар хулинчи предприятисемпе учрежденисем шкулсемпе больницӑсем валли вутӑ турттармалли плана 1945 ҫулхи мартӑн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пурнӑҫа кӗртсе ҫитерме пулчӗҫ.

Канашлу участникӗсем, Шупашкар районӗнчи колхозниксен ячӗпе, Шупашкар хули валли вутӑ турттарма задани панӑ ытти районсене ҫак ӗҫе активлӑн хутшӑнма тата хула валли кирлӗ вутта хӑвӑртрах турттарса пӗтерме чӗнсе каларӗҫ.

В. КАРАУШЕВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

САВĂНĂÇЛĂ ПУХУ

ÇЕРПУ, декабрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр). СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Таткăнаш ялсоветĕнчи «Сталинцы» колхоз колхозницине Евдокия Ефимовна Ефимовăна—Ача амăшĕ — героиня ятне пани çинчен илтсенех, «Сталинцы» колхозра савăнăçлă пуху пулса иртнĕ.

Пухура «Сталинцы» колхоз председателĕ Захаров юлташ колхозниксемпе колхозницăсене савăнăçлă хыпар—Евдокия Ефимовна Ефимова юлташа Ача амăшĕ—героиня ятне пани çинчен пĕлтернĕ тата Ача амăшне — героиньăна Евдокия Ефимова юлташа хĕрÿллĕн саламласа, нумай çул хушши пурăнма сывлăх суннă. Ача амăшĕ—героиня Евдокия Ефимовна пухура хумханулла сăмах тухса каланă:

— Мана çакăн пек пысăк чыс тата хисеп тунăшăн,—тенĕ Ефимова юлташ,—эпĕ пĕтĕм чун-чĕререн аслă çулпуçăмăра Сталин юлташа тав тăватăп. Совет влаçĕ пулман пулсан, эпĕ 10 ача çитĕнтерес çукки пуриншĕн те паллă. Ĕлĕкхи самана манăн ачасем пуянсем патĕнче кĕтÿ кĕтсе е тарçăра çÿренĕ пулĕччĕç. Халĕ ман ачасем пурте вĕренсе çын пулчĕç. Вĕсем пурте пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнаççĕ.

Евдокия Ефимовна Ефимова юлташа çавăн пекех ВКП(б) райкомĕнче тата районри ытти организацисемпе учрежденисенче те ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Çамрăк рабочисемпе ĕçлессине лайăхлатрăмăр

Канашри вагонсем юсакан заводри комсомолецсем çамрăк рабочисем хушшинче ĕçлессине нумай лайăхлатрĕç. Ку ĕçе эпир, [illegible] çамрăк рабочисем пурăнмалли условисене лайăхлатас ĕçрен пуçларăмăр. Завод çумĕнче 100 çын валли интернат уçрăмăр. [illegible] Халĕ унта пурăнакансене ăшă кĕпе-тумтирсем, урана тăхăнмаллисем, простынясемпе [illegible]. Çамрăк рабочисене кашни кунах [illegible].

Кану вăхăтне лайăх ирттерме хĕрлĕ кĕтес уçрăмăр. Унта хĕрлĕ кĕнекесем, хаçат-журналсем, шашка-шахмат пур. Агитатор-комсомолецсем докладсемпе калаçусем ирттереççĕ, [illegible] вулаççĕ. Декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне çамрăк рабочисем валли эпир тата тепĕр интернат уçатпăр.

Заводра Волчкова тата Устюгова юлташсем комсоргсем пулса ĕçлекен цехсенче комсомолецсен вăйĕпе хĕрлĕ кĕтессем организацилерĕç. Унта ялан агитаторсем, дежурнăй комсомолецсем пулаççĕ. Хĕрлĕ кĕтес çумĕнче стена хаçачĕсем, боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ.

Çамрăк рабочисем художествăллă кружоксенче те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Гуряшкин юлташ ертсе пыракан хор кружокĕ заводра лайăх концертсем парать.

Çамрăк рабочисен пурнăçпа йăла условисене лайăхлатни ĕç тухăçлăхне ÿстерме нумай пулăшрĕ. Чылай çамрăксемпе комсомолецсем ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыма пуçларĕç, стахановецсен йышĕ ÿсрĕ.

Çамрăк рабочисем хушшинчи ĕçе, вĕсен пурнăçпа йăла условине лайăхлатас ĕçе эпир куллен туса пыратпăр.

П. МАЛЫШЕВ.
Канашри вагонсем юсакан заводри ВЛКСМ Комитечĕн секретарĕ.

ÇУРÇĔРТИ ГЕОГРАФИ ОБЩЕСТВИ

Архангельск хулинче çурçĕрти географи обществи тунă. Унăн тĕп задачи çурçĕрти пуянлăхсене халăх хуçалăхĕ валли мобилизацилемелли майсене вĕренесси пулать. Общество чи малтан çурçĕрти вăрмансен пуянлăхне вĕренет. (ТАСС).

Киров ячĕпе тăракан колхозăн çыннисемпе ĕçĕсем

Иртнĕ çулсенче Киров ячĕпе тăракан колхоз Первомайски районра кая юлса пыракан колхозсенчен пĕри пулнă. Вăрлăхсем, выльăх апачĕ çитмен. Лашасем питĕ сахал тата вăйсăр пулнă. Колхоз членĕсем хушшинче ĕç дисциплини начар пулнă.

— Эпир — кировецсем, Сергей Миронович ятне йышăннăскерсем, çак чаплă ята тивĕç ĕçлемелле, районра малти вырăна тухассишĕн тăрăшмалла, — терĕç колхозри малта пыракан çынсем.

Çак ыйту тавра пухусенче, пĕччен калаçусенче стена хаçачĕ урлă хĕрÿллĕ агитаци пуçарса ятăмăр.

Чăнах та, Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче çĕнĕ йывăрлăхсем хутшăнчĕç. Çав йывăрлăхсене çĕнтерсе, колхозри ĕçе вăхăтра туса пырасси пĕтĕмпех колхоз членĕсенчен килнине нумайĕшĕ ăнланса илчĕç.

Пур ĕç те ăна тума тĕплĕн хатĕрленинчен килет. Çавăнпа та, ялхуçалăх çулне лайăх ирттерес тесен, чăн малтанах çуракине тĕплĕн хатĕрленмелле. Иртнĕ çуракине эпир тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илтĕмĕр. Çураки вăхăтĕнче ĕç лашисене çитерме çителĕклĕ таран утă-улăм, сĕлĕ уйăрса хутăмăр, ăна çуракине тухиччен пĕрре те расходламарăмăр.

Çураки вăхăтĕнче кашни лаша пуçне сухаламалли çĕрлаптăкĕ 10 гектара яхăн пулчĕ. Лашасен ĕçне çăмăллатас шутпа, колхозăн чылай вăхăт ĕçлемесĕр ларнă тракторне юсама шутларăмăр. Ку ĕçе вăрçăччен тракторист пулнă, вăрçăран аманса килнĕ И. Никитин хăй çине илчĕ. Вăл хă- [illegible]

[illegible] Уйрăмах пирĕн вир вăйлă пулчĕ. [illegible] Вире эпир клевер вырăнне акрăмăр. Вăл вырăна сухаласа хыççăн клевер тымарĕсене суйласа тасатрăмăр, унтан сÿренĕ, культиваци турă, татах сÿренĕ, юлашкинчен сарлака ретлĕ сеялкăпа, сошникĕсене пĕрре урлă сиктерсе сайралатса акнă. Çапла майпа акнине пула, гектар çине пурĕ те 12 килограмм çеç вăрлăх кĕчĕ. Аксан 8—9 кунтан, шăтиччен малтан, кассине тăрăх пĕр хут тимĕр шăллă сÿрепе сÿрелесе çемçетрĕмĕр. Ун хыççăн çумăрсем пулчĕç, вир кассăн-кассăн питĕ хитре шăтса тухрĕ. Çумкурăксене тухнăçемĕнех çумласа пынă. Часах пирĕн вир йăран хушшисем пытанмалла кашласа кайрĕ. Пурĕ пирĕн колхоз 13 гектар вир якнăччĕ, çавăн çинчен кашни гектартан 15—30 центнера çити пухса илтĕмĕр. Кăçал вир

кăна кашни ĕçкунĕ пуçне 650-шар грамм валеçрĕмĕр. Ытти тырăсем те ăнса пулчĕç.

Тырă акнă çĕр лаптăкĕ иртнĕ çулпа танлаштарсан чылай пысăк пулнă пулсан та, тырăсене планпа пăхнă вăхăтчен маларах пухса кĕтĕмĕр. Ĕçре эпир уйрăм сдельщинăпа анлăн усă курнă. Çавна пула, Н. Епифанова, Е. Зайцева, А. Владимирова, А. Леонова, Ф. Лазарева, А. Казеева, П. Краснова тата ыттисем те вырнă чухне нормăна 130—180 процент тултарса ĕçлерĕç. Вырнă вăхăтрах çапассине те организацилерĕмĕр. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тырăсене çапса пĕтернĕ, çав уйăхăн 12-мĕшĕ тĕлне государствăна обязательство тăрăх тырă тата натуроплата парса татнă. Авăн çапнă çĕрте И. Никитин, А. Краснов, Е. Прокопьева, А. Васильев колхозниксем мухтава тивĕç ĕçлерĕç. Вĕсем авăн çапас ĕçре социализмлă ăмăртăва организацилекенсем пулчĕç.

Бригадăсем хушшинчи ăмăртура ырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра М. Кутузова ертсе пыракан 3-мĕш бригада мала тухрĕ.

Килес çулхи вăйлă тырпулшăн эпир август уйăхĕнчех кĕрешме тытăннă. Çĕртме сухи айне 3000 лава яхăн тислĕк тăкнă. Районра чăн малтан çĕртме сухи туса пĕтернĕ, çавăн пекех ыраш акассипе те районра мала тухнă. Хамăр ĕçсене вĕçленĕ хыççăн хамăрпа ăмăртакан «Красная Чувашия» колхоза çĕртме сухи тума тата ыраш акма пулăшрăмăр. МТС панă план тăрăх колхоз хăйĕн тракторĕпе 200 гектар сухаламаллаччĕ, эпир 343 гектар сухаларăмăр. Колхоз тракторисчĕ Никитин юл- [illegible]

[illegible] Асла Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладне пикенсе вĕренеççĕ. Декабрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех агрогружоксем ĕçлеме тытăнаççĕ. Кăçал эпир колхоз уйхирĕнче ĕçлекен кашни çыннах агрокружокра вĕрентсе кăларас задача лартатпăр.

Выльăхсем пирĕн ăшă та çутă çуртйĕрсенче пурăнаççĕ. Вĕсене валли çителĕклĕ таран апат пур. Вăл апата пĕтĕмпех старшни конюхпа ферма заведующи аллине акт çырса панă. Фермăсенче планпа пăхнă чухлĕ выльăхсем пур. Фермăра ĕçлекенсем тата конюхсем зоотехкружоксенче вĕренме тытăнаççĕ.

П. ИГНАТЬЕВ.
Киров ячĕпе тăракан колхоз председате

Çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ

СЕНТЕРВĂРРИ, декабрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче çитес çуракине хатĕрленес ĕç пуçланчĕ. Декабрь уйăхĕ тĕлне районĕпе 150 плуг, 15 сеялка, 15 триер тата сÿресене пĕтĕмпех юсаса пĕтерниĕ. Уйрăмăнах «Красная Армия», «Коминтерн», «Кустарь» колхозсем малта пыраççĕ. Районри чылай колхозсенче вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те ĕç авăн пырать. «Çĕнтерÿ» колхоз 1.400 лав, Киров ячĕпе тăракан колхоз 1.100 лав, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 420 лав, «Мартăн 8-мĕшĕ» колхоз 510 лав тислĕк кăларнă. Çавăн пекех районри чылай колхозсем вăрлăх фончĕ хывса çитернĕ.

Çаксемпе пĕрлех ĕçри çитменлĕхсене те палăртса хăвармалла. «Красный волгарь» колхозăн 108 центнер тырă, 80 центнер çĕрулми, Упакасси ялсоветне кĕрекен «Малалла» колхозăн 20 центнер тырă, 112 центнер çĕрулми вăрлăхĕсем çитмеççĕ.

Ф. ИЛЬИН.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Афинăпа Пирейре Англи çарĕсемпе Греци правительствин çарĕсем ЭЛАС («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕн» çар организацийĕ) отрячĕсемпе кунĕпех çапăçнă. Скоби генерал çапла пĕлтернĕ: Англи çарĕсем хăшпĕр районсенче малалла куçнă. Ĕнер Пирейри снайперсене пĕтерсе тăкма унта тинĕс пехотин отрячĕ анна. Кăнтăрла Пирей гаванĕнче тăракан Британин эсминецĕ Пирейри тĕреклетнĕ пунктсене тупăсемпе пенĕ. Çав пунктсенче партизансен йышлă вăйĕсем тăраççĕ пуль тесе шутлаççĕ. Хăшпĕр тĕлте партизансем питĕ вăйлă хирĕç тăраççĕ. Ĕнер çапăçусене Англи танкĕсемпе артиллерийĕ те хутшăннă. Йышлă мар самолетсем партизансене пулеметсемпе пенĕ.

ЭАМ центральнăй комитечĕ çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: Папандреу сутăнчăксене наказани пама тата квислинговецсене правительство учрежденийĕсенчен хăваласа кăларма панă хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртмерĕ. Çĕршывра нимĕçсем организациленĕ хĕçпăшаллă вăйсем халь те пур-ха, — тенĕ.

Общинăсен палатинче Грецири лару-тăру çинчен сÿтсе-явни

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян общинăсен палатинче Грецири лару-тăру çинчен прениксем пуçланнă. Чи малтан лейборист Сеймур Кокс королĕн нумаях пулмасть каланă сăмахĕ пирки тÿрлетÿ йышăнма сĕннĕ. Çав тÿрлетÿре çапла каланă: король сăмахĕнче «Грецире тата Европăри ытти пайĕсенче демократин тусĕсене хĕçпăшалсăрлантарма е тăшмана аркатса тăкас ĕçре паттăррăн пулăшнă халăх юхăмĕсене пусарса лартма тăрăшса», Англи çарĕсемпе усă курмĕç, тесе шантарса калани çук, тенĕ.

«Хальхи вăхăтра, — тенĕ Кокс. — Афинăн таса çĕрĕнче Акрополь стенисем патĕнче Англи салтакĕсемпе Греци патриочĕсен виллисем пĕр-пĕринпе юнашар выртаççĕ. Вĕсене союзниксен хĕçпăшалĕнчен персе янă пульăсем вĕлернĕ. Эпĕ парламентран çак тăвана тăван вĕлерекен кĕрешĕве халех пĕтерсе лартма ыйтатăп. Юлашки вăхăтра пиртен хăшпĕрне çакăн пек туйăнать: Эпир çĕнтерес сехет çывхарса килнĕ май, акăлчансем Европăри халь шăтса тухакан халăх вăйĕсене хирĕç кĕрешме, кивĕ те хăйсен вăхăтне пурăнса ирттернĕ нумай режимсене пулăшма пăхаççĕ пек туйăнать. Çакăн пек туни эпир нумаях пулмасть Венгрире тата Италире курт тăмăр». Кокс çапла тума сĕннĕ: ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн е ытти министрăн Афинăна вĕçсе каймалла та унта нациллĕ правительство тумашкăн тĕрлĕ партисемпе лидерсен конференцине пухмалла. Халлĕхе перемири тумалла, Англи çарĕсене хула урамĕсенчен илсе каймалла. Ун хыççăн суйлав тата плебисцит туса ирттерме кирлĕ условисем туса хумалла, пĕтĕм халăх вара, сасăласа, король Грецие таврăнас ыйтăва татса парĕ, тенĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЧЕ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Грецири лару-тăру пирки правительствăна айăпламине хирĕç Черчилль çапла каланă: «Грецире тата Европăн ытти пайĕсенче демокра- [illegible]

[illegible] сирпĕтсе антарма хатĕрленнĕ пулнă.

Англи Сфорц графа Италин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ вырăнне лартма чарнă тенине сирсе ярса, Черчилль çапла каланă: «Эпир çакна çеç калама пултаратпăр: [illegible]

Грецири лару-тăру пирки ыттисен тухса калани

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче Греци ыйтăвĕпе сăмах тухса каласа, «Коммонуэлс» ятлă çулахай партин лидерĕ Ричард Экленд Кокс каланине çирĕплетсе панă, вăл çапла каланă: грексем пĕр-пĕринпе тÿпелешеççĕ, мĕншĕн тесен демократишĕн тăман Зервас полковник акăлчансене Грецири чăн-чăн халăх юхăмне хирĕç хĕçпăшалпа тата укçапа пулăшса тăнă.

Лейборист Паркер çапла каланă: Англи правительствин хальхи ĕçĕсем Англи грексене хăйсен правительствине ирĕклĕн суйлама май пама пулнине пурнăçа кĕртменнине пĕлтереççĕ, тенĕ.

Независимăй депутат Том Дрейберг çапла каланă: Черчилль «пĕтĕм тĕнче шухăш кăмăлне хирĕç пырать», тенĕ.

Парламентри консерваторсен реформистла комитечĕн пĕр лидерĕ Квинтин Хогг хăйĕн политикăллă противникĕсене хăйпе пĕрлешме тата правительствăна пĕтĕм Европăра законпа влаçа хисеплеттерме тăрăшма чĕннĕ, вĕсене хисеплени çеç тĕрĕс те тĕрĕслĕхлĕ ĕçсен никĕсĕ пулма пултарать, тенĕ вăл.

Национал-либерал Гарольд Никольсон çапла каланă: Грецири официальнăй мар организацисене пурне те хĕçпăшалсăрлантармалла, правительствăн Грецие халех пĕр министра ямалла, грексене—çитĕ пĕр-пĕринпе тÿпелешме,—тесе каламалла.

Независимăй Клемент Дэвис премьер-министрăн демократи пирки каланă сăмахĕсене ырланă. Анчах вăл çакăн пирки йăнăшрĕ, тенĕ Дэвис:—Грецире союзниксем лартнă правительство çинчен вăл конституциллĕ правительство тесе каларĕ, тенĕ. Дэвис шухăшĕпе правительство Грецире ответлăха хăй çине илни аслă ĕç туни пулнă пулĕччĕ.

Лейбористсен партийĕн лидерĕн заместителĕ Артур Гринвуд çапла каланă: эпĕ хамăн туссене çав тÿрлетÿшĕн сасăлама чĕнесшĕн. Англин çак кансĕр лару-тăруран тухмалли мая тупасах пулать. Англи салтакĕсемпе Греци халăхĕ пĕр-пĕринпе çапăçнине урăх чăтса тăма çук. Çав çапăçăва пĕтерсе лартмалла. Вăл малалла тăсăлса пыни питĕ намăс пулнă пулĕччĕ тенĕ. Гринвуд малалла çапла каланă: «Кÿренмелле, анчах та çакă факт пулса тăрать: премьер-министр правительство Грецире сылтăмрисене пулăшать тесе шухăшлама май пачĕ».

«Греци халăхĕ пĕтĕмĕшле суйлавра хăйĕн правительствине ирĕклĕн суйласа лартсан, вăл хăйĕн ĕçĕсене майлаштарĕ,—тенĕ Гринвуд.—Эпĕ çапла шутлатăп: çакăнта сăмах Англи чыслăхĕ çинчен пырать. Тăвана тăван вĕлерекен çак вăрçа пĕтерсе лартма май пулсан, ăна халех пĕтерсе лартмалла».

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче Греци пирки паян пынă пренисенче юлашкинчен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Греци правительствине реакциллĕ ушкăн пек кăтартма юрамасть, тенĕ. Иден каланă тăрăх, ЭАМ представителĕсем пулса тăнă министрсем Греци çарĕн ялланхи чăсĕсене салатса яма, хăйсен отрячĕсене сыхласа хăварма тăрăшнă. Çакна пула (Британи правительстви мĕнле те пулин çĕнĕ инструкцисем панине пула мар) хирĕçÿ тухса кайнă та вара. Суйлава Грецире йĕрке туса хунă хыççăн ирттермелле, тенĕ Иден.

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палати правительствăна шаннă. Правительствăн Грецири политикине критиклекен резолюцишĕн 30 сасă, ăна хирĕç 279 сасă панă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКАНЕЦСЕМ ЛЕЙТЕ УТРАВĔ ÇИНЕ ÇĔНĔ ДЕСАНТ АНТАРНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Лейте утравĕ çинче американецсен 7-мĕш дивизи чăсĕсем, авиаци тата флот пулăшнипе, Ормок хулинчен виçĕ миля кăнтăртарахра Япони позицийĕсен тылне аннă та çавăнтах çурçĕрелле наступлени тума пуçланă. Ку ĕç японецсемшĕн пачах та кĕтмен çĕртен пулса тухнă. Халĕ вĕсем, çапăçăва хăйсен резервĕсене кĕртсе ярса, Америка çарĕсем çурçĕр енчен, хĕвелтухăç енчен тата кăнтăр енчен хĕссе пынине чарса лартма хăтланаççĕ. Япони çарĕсен позицийĕсене американецсем икке çурса пăрахнă та пĕтĕм фрончĕпех хĕссе пыраççĕ.

Американецсем десант антарнă хыççăнах Япони суднисен караванне курнă. Караванра 6 пысăк транспорт тата 7 эсминец пулнă, вĕсем Япони çарĕсене пулăшма пынă. Союзниксен авиацийĕ çав каравана çийĕнчех атакăланă, çав вăхăтрах Япони авиацийĕ союзниксен десант антарнă транспорчĕсене атакăланă. Союзниксен авиацийĕ японецсен 13 суднине те вĕсене путатма ĕлкĕриччĕнех путарнă. Японецсен 4.000 салтака яхăн пĕтнĕ. Союзниксен пĕр эсминецне тата тепĕр пĕчĕк транспортне торпеда пырса тивсе йывăр сиен тунă, вара вĕсене хăйсен командисемпех шыва путарнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 8-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Голландире çĕр çинчи çарсен патрулĕсем кăна кĕрешнĕ. Гюртрен хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра союзниксен çарĕсем Бергштейн хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле кăштах малалла кайнă.

Мец хули районĕнче Мец хулинчен хĕвеланăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Сен-Кентенпа Плаппвиль форчĕсене туртса илнĕ.

Саар шывĕ улăхĕнче Саар шывĕнчен хĕвел тухăçнерехре кĕрешекен союзниксен çарĕсем Пахтен хулине кĕрсе кайнă. Саарлаутерн хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Хостенбах хулине йышăннă. Саргемюнд хулинче кашни çуртшăн çапăçусем пыраççĕ. Саргемюнд хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре кĕрешекен союзниксен çарĕсем Эттинген хулине йышăннă. Ытти чăçсем Энхенберг хулине кĕрсе кайнă, хула тулашĕнчи темиçе яла йышăннă. Унта тăшман вăйлăрах хирĕç тăма пуçланă. Мерцевелер хулинче йывăр çапăçусем пыраççĕ, тăшман контратака тунă хыççăн союзниксем хулан пĕр пайне хăварнă.

Эльзас улăхĕнче Кольмар хулинчен çурçĕртерехре тăшман хаяррăн хирĕç тăнă, контратакăсем тунă, анчах, апла пулин те, союзниксен çарĕсем кăштах малалла кайнă. Вогез тăвĕсен районĕнче тăшмантан Тюр шывĕн улăхне тасатнă, союзниксен çарĕсен чăсĕсем Танн хули патне çитнĕ, халĕ унта çапăçаççĕ.

Декабрĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем Кельн хулине тапаннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 8-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла [illegible]

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ УМЕН

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible] пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцине хатĕрлекен комитетра ĕçлеме пынă. Делегацире çаксем тăраççĕ: ВЦСПС секретарĕ Е. Я. Сидоренко (делегаци председателĕ), М. Е. Евстратов (центрти районсен хура металлурги рабочийĕсен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕ) тата М. И. Кузнецов (ВЦСПС-ăн тĕнчери халăхсем хушшинчи ĕçсен отделĕн заведующийĕ).

Çав комитетра çавăн пекех тата Англипе Америка профсоюзĕсен представителĕсем те ĕçлеççĕ.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИНЕ ПУХАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОМИТЕТ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцине пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет пĕтĕм тĕнчери конференцин кун йĕркинчи ыйтусем çинчен пĕлтернĕ. Çав кун йĕркине пĕтĕм тĕнчери конференци пăхса тухса çирĕплетмелле. Вăл çакăн пек:

1. Союзниксене тăшманпа вăрçма пулăшса тăрасси.
2. Мир çинчен тумалли килĕшÿ пирки профсоюзсем мĕнле шутлани, сăмахран пĕтĕм тĕнчери мире пĕтĕмĕшпе епле организацилесе ярасси çинчен, халĕ гитлеровецсем оккупациленĕ çĕршывсене союзниксем оккупацилесси çинчен, Германие епле тыткаласси çинчен, профсоюзсен килĕшÿ конференцийĕнче, çавăн пекех тата çĕршывсене пулăшу парас, ура çине тăратас тата вăрçă хыççăн пурнăçа урăхла йĕркелесе ярас тĕлĕшпе малтанлăха ĕçлекен комиссисемпе конференцисенче профсоюзсен представителĕсем пуласси çинчен.
3. Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацине тума кирлĕ никĕссене палăртса хурасси.
4. Вăрçă хыççăнхи тапхăрта профсоюзсен чи малта тăракан требованийĕсем.
5. Вăрçă хыççăн пурнăçа урăхла йĕркелесе ярас ыйтусем: кашни халăх тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем тĕлĕшпе лартмалли социальнăй тата экономикăллă требованисен пĕтĕмĕшле принципĕсем, социальнăй обеспеченин тата пурне те ĕç тупса парас ыйтăвăн тĕп принципĕсем.

Комитет çапла шутлать: пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен 1945 çулхи февраль уйăхĕнче пулса иртмелли конференцине пĕр 150 делегат пухăнĕ, вĕсем тĕрлĕ халăхсен профсоюзĕсен 40 организацинчен мĕн пурĕ 30 çĕршывран ытла килĕç.

Англире самооборона отрячĕсене салатса яни

АНГЛИ КОРОЛĔ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер, Англири самооборона отрячĕсене салатса ярасси çинчен закон кăларнă май, Лондонра çав отрядсен парачĕ пулса иртнĕ. Парадра 7.000 офицерпа салтак пулнă.

Парад хыççăн Англи королĕ радиопа сăмах каланă. Вăл самооборона отрячĕсене тав тунă. Çав отрядсене Англире тăватă çул каялла, Англи вилĕмле хăрушлăх умĕнче тăнă вăхăтра тунине палăртса, король çапла каланă: «Тăватă çул хушши пĕр канăçсăр пурăннă вăхăтра çак гражданла çарăн вăйĕсем ÿссе пычĕç. Часах вăл лайăх хĕçпăшалланнă çар пулса тăчĕ; вăл ялланхи çарăн салтакĕсен ĕçĕсене туса тăма пултаракан пулса тăчĕ, ялланхи çарăн салтакĕсем вара ют çĕршывсене кайма май илчĕç».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
декабрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа
кунсеренех
американецсен саслă, илемлĕ
«ПЕСНЯ О РОССИИ»
ятлă çĕнĕ фильмне кăтартать.

Халăх вăйĕ

Ку ĕç вăрçă пуçланнă çул сентябрь уйăхĕнче пулнă. Ун чухне эпир тăванăмăрсене, юлташăмăрсене, пиччемĕрсене, шăллăмăрсене вăрçă хирне ăсататтăмăрччĕ. Никита Максимов ывăлĕсене — Степанпа Ильяна —ăсатнă кун пĕр тумлам куççулĕ те кăларман.

Вăл икĕ ывăлне кĕрекене юнашар лартнă та арча тĕпĕнчен хĕрлĕ тутăрпа чĕркенĕ япала туртса кăларнă. «Акă, пăхăр ĕнтĕ. Тăватă награда... орденсемпе медальсем», — тенĕ вăл. Гренадер ăсату черккине тултарнă та ывăлĕсем умĕнчех кĕскен каланă: —Манăн тупă нимĕçсене сахал мар тирпейлерĕ... Халĕ Михале нимĕçсемпе вăрçать ĕнтĕ. Кĕçех эсир те унта çитĕр. Шывра та ан путăр, вутра та ан çунăр эсир. Ачăр ятне нихăçан та ан çĕртĕр».

Никита Максимов — салтак кутамкине вунă çул хушши çурăм çинче çĕклесе çÿресе пиçнĕ çын. Вăл, çĕршыв чĕнсен халĕ те çапăçăва кайма хатĕрри çинчен пĕлтернĕ. 62 çулхи ашшĕ умĕнче ывăлĕсем çирĕп сăмах каланă.

— Тăшмана çĕмĕретпĕр! Тăшман шăмми кĕл пулса арканĕ!—Çакăн пек шухăшкăмăлпа тухса кайнă Анат Сăнар ялĕнчи арçынсем тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхлама.

Унтанпа Анат Сăнар хушшинчи Юрпаш шывĕ нумай юхрĕ. Унăн улăхĕнчи курăксем темиçе хут чечекленсе типрĕç. Унăн уйхирĕсем тухăçлă тырпул ÿстерчĕç. Çынсем те улшăнчĕç. Анчах эпир тăшман чури пулмарăмăр. Пачах урăхла, пирĕн вăйсем нумай ÿсрĕç. Пирĕн вăрçă хирĕнчи тăвансемпе юлташсем чапа тухрĕç.

Гренадер ывăлĕ Илья Никитин ашшĕн наказне чыслăн пурнăçларĕ: вăл ку таранччен стройран тухмасăр çапăçать. Рядовой Никитин Бородино хирĕнче, Ладога кÿлли патĕнче пулнă. Воронежшăн вăрçнă. Нимĕçсен йышлă вăйне пĕтерсе тăкнă çĕрте—Сталинград патĕнче çапăçнăшăн ăна «За оборону Сталинграда» медальпе наградăланă. Вăл аслă Атăлтан пуçласа Висла леш енне çитиччен вăрăм çул утса тухнă. Ку—наступлени çулĕ. Вăл халĕ, тăван çĕршыв нимĕçсенчен тасалса çитнĕ чух, Дон, Çурçĕр Донец, Днепр, Хĕвеланăç Буг, Сан шывĕсемшĕн пынă хаяр çапăçусене аса илет.

Унăн вăрçă çулĕ нумай эпизодсемпе пуянланать. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн сарлака кăкăрĕ çине «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ çакăçĕ. Вăл мухтавлă салтак пулчĕ. Хăйĕн вилнĕ тăванĕшĕн—Михалешĕн вăл тăшмана тавăрмаллипех тавăрать.

Никита Максимовсен урамĕнчи Сергей Жарковпа унăн карчăкĕултă ывăл ÿстернĕ. Совет влаçĕн тивлечĕпе вĕсен ачисем вĕренсе усăллă çынсем пулнă. Анчах халĕ вĕсем килте иккĕн кăна пурăнаççĕ. «Ывăлăмăрсем унта пирĕн кунти лăпкă пурнăçа хÿтĕлеççĕ»,—тет 70 çула çывхарнă Çирки мучи.

Унта унăн ывăлĕсем чăнах та маттур çапăçаççĕ. Димитри ятлă ывăлĕ, мĕн вăрçă пуçланнăранпах фронтра çапăçаканскер, офицер пулчĕ. Ăна правительство «Хĕрлĕ Çăлтăр» тата «Отечественнăй вăрçă» орденĕсемпе наградăларĕ.

Тимĕрçĕ Евграф Некрасов та йышлă ача пăча ÿстернĕ. Çав ачасене çитĕнтерме государство çуллен укçа парса пулăшнă. Вĕсем, тăван çĕршыв çине хура пĕлĕтсем капланса килсен, ăна асаплăхран çăлса хăварма çĕкленнĕ. Пурнăçа та хĕрхенмен.

Тимофей, подразделенишĕн йывăр самант килсе тухнă чух, вилĕмрен хăрамасăр, тăшман амбразури çине пĕтĕм пĕвĕпе сиксе ÿкнĕ те çамрăк пурнăçне тăван çĕршывшăн панă. Володьăпа Александр правительство наградине илнĕ.

— Чăнах та, харсăр та маттур пирĕн ял çыннисем—теççĕ Анат Сăнарсем. Отечественнăй вăрçăра 20 çын правительство наградисене илме тивĕçлĕ пулчĕç. Халăх аллинче çав çынсен списокĕ пур. Унта эпир А. Максимовăн, И. Павловăн, П. Озеринăн, П. Булыгинăн, Н. Маткинăн; П. Некрасовăн, И. Прокопьевăн, Л. Маткинăн тата ыттисен ячĕсене хисеплĕн асăнса вулатпăр.

Ял çыннисем аван пĕлеççĕ: вĕсем пирĕн пурнăçшăн кĕрешнĕ, йывăр пулсан та, каялла чакман. Вĕсем тăван çĕршыва сутман. Вĕсем, пурнăç кутамки йывăр пулсан та, тапаçлана-тапаçлана йăтнă. Çакăнтан хакли нимĕн те çук: йывăрлăха курмасăр ырри пулмасть.

Юлташ! Йывăр вăхăтра сирĕншĕн пирĕн ăшă саламăрсем хаклă пулчĕç пуль? Анчах сирĕн çырăвăрсем те ылттăнран та хаклă пулчĕç. Эпир çырусемпе сире курнă пек калаçрăмăр. Эпир вĕсене пухса пыратпăр. Унта хаклă-хаклă сăмахсем пур.

Анчах вăрçă çухатусăр пулмасть. Хăшпĕр юлташсем пуçĕсене вăхăтсăр хучĕç. Г. Королев, Л. Скворцов, Я. Сорокин, В. Жарков воинсен ячĕсене ял çыннисем нихăçан та асран ярас çук. Акă, клхоз пĕвисем, хуралтăсем, пахчасем. Вĕсене тунă çĕрте пиртен вăхăтсăр уйăрăлнă юлташсем те пулнă, тар тăкса ĕçленĕ вĕсем. Вăрçăри геройла ĕçĕсемпе пĕрлех, çав япаласем те вĕсем халăх пурнăçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленин палăкĕсем пек туйăнаççĕ пире.

Шкул ачисем, эсĕ фронта кайнă чух пĕчĕкке пулнăскерсем, сире асăнса юрă юрлаççĕ. Çав юрă анлă колхоз хирĕнче те, итем çинче те, шкулта та илтме пулать.

Сарă пике вăлак патне шыв ăсма анать-и, çамрăк инке ăшă сĕт суса таврăнать-и, ватă мучи колхоз урапине тÿрлетет-и,—пурте, пур çĕрте те аса илеççĕ сана, фронтри юлташăмăр. Ватăсемпе хĕрарăмсем, ачасем, сире кĕтсе, колхоз уйхирĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Сакăрвун пилĕк киле яхăн пĕрлештерсе тăракан Анат Сăнарти «Новый путь» колхоз кая юлса ĕçлемест. Çуракипе уборка ĕçĕсене кăçал та, ытти çулсенчи пекех, пахалăхлă та вăхăтра ирттернĕ. Уйра вăйлă тырпул ÿсрĕ. Ытти обязательствăсемпе пĕрлех, государствăна тырă памалли обязательствăна та вăхăтра пурнăçларĕç, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 600 пăт тырă панă. Колхозниксене аванс йĕркипе ĕçкунĕ пуçне 1,5-шер килограмм тĕштырă, 2-шер килограмм çĕрулми валеçсе панă.

Колхозниксем икĕ-виçĕ çыншăн ĕçлеççĕ. Орденоносец-боецсен ашшĕ Б. Некрасов кăçал «Новый путь» колхозăн машинисене кăна мар, таврари 7—8 колхозăн машинисене те юсарĕ. Н. Максимов хăйĕн вăкăрĕпе колхоза кĕлте тата тырă турттарса пачĕ, унăн çемьи кăçал 800 ĕçкунĕ таран тунă.

— Ывăлăмăрсем, юлташăмăрсем, вăрăм çула утса тухрĕç. Анчах çитес çĕре çитмен-ха. Вăрăм çулăн юлашки çухрăмĕсем йывăр та вăрăм пек туйăнаççĕ,—каласа парать Никита Максимов. — Анчах çул çÿревçĕ çитес вырăна курсан, тата хытăрах утма тытăнать, ăна вăй хушăннă пек туйăнать. Вăл вара малтанхинчен хытăрах утать. Çакă ĕнтĕ салтак ирĕкĕ пулать. Пирĕн ял çыннисем те Берлина çитĕç!

Яков СИГАЙ.

СОВЕТСКОЕ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарен — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04233 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 ц. д. Тираж 16.000 экз.